27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
АПРЕЛЬ
19
ЮНКУН
78(6573) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Йывăç юхтарас ĕçе кăтартуллăн ирттерер

Кĕçех йывăç юхтарас ĕç пуçланать. Вăрман хатĕрлекен организацисем тата вĕсене ĕçпе туртăм вăйĕ парса тăракан районсемпе колхозсем умĕнче тăракан хальхи тĕп задача—йывăç юхтарас ĕçе пур енчен те тимлĕн хатĕрленсе çитесси тата ăна кăтартуллăн ирттересси пулса тăрать. Çак ĕçе вăхăтра та ăнăçлăн туса ирттернинчен республикăри предприятисемпе заводсене чĕртавар, топливо йĕркеллĕн парса тăрасси, заводсемпе предприятисем йĕркеллĕ ĕçлесси килет.

Йывăç юхтарас плана ăнăçлăн пурнăçланинчен, сăмахран, Куславкка комбиначĕпе Çĕмĕрлери «Большевик» завод ăнăçлă ĕçлесси килет. Улатăрти заводсем тухăçлăн ĕçлесси те çакăнтан нумай килет. Савăнпа та ку ĕçе вăхăтра тунин кирлĕ. Пуринчен ытларах çырхи шывпа йывăçсене сулăсем туса юхтарма пур енчен те хатĕрленсе çитесси çине тимлĕн савăрăнса пăхмалла.

Аслă отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче йывăçпа усă курасси уйрăмах ÿсрĕ. Заводсемпе фабрикăсене фронтпа çĕршыв экономикăсене ăнăçлăн пурнăçлама çителĕклĕ таран йывăç кирлĕ. Анчах пирĕн республикăри вăрман хатĕрлекен организацисем кăçал йывăç юхтарас ĕçе лайăхрах ирттерессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ теме çук-ха. Шупашкарти вăрманпромхозăн кăçал 15 пин кубометр йывăç юхтармалла, вăл шутран 8 пин кубометрне çеç сулăсем туса хатĕрленĕ. Йывăç юхтарма 350 пакур, 8 лодка хатĕрлемелле, апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне 200 пакур, 5 лодка çеç хатĕрленĕ. Ĕç вăйĕ çителĕксĕрри çине йăвантарма çук, паянхи кун тĕлне унта ку тĕлĕшпе 200 çын ĕçлет.

Чăваш АССР Вăрман Халăх Комиссариачĕ те йывăç юхтарма хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кирлĕ пек тăрăшмасть. Унта ĕçлекенсем вăрман хатĕрлекен организацисем йывăç юхтарма мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн пĕлмеççĕ, Вăрман Халăх Комиссариачĕ ку ĕçе оперативлă ертсе пымасть.

Йывăç юхтарас ĕçри пĕлтĕрхи йăнăшсене халех шута илсе выводсем тумалла. Пĕлтĕр Шупашкар пристанĕ, баржа вăхăтра памасăр тăрса, йывăç юхтарас ĕçе чылаях чăрмантарнă. Кăçал çакăн пек чăрмавсене пачах та тумалла мар.

Йывăç юхтарас ĕçĕн ăнăçлăхне ĕçпе туртăм вăйĕсене çителĕклĕ парса тăни, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарни татса параççĕ. Ку ĕçе пуçласа хутшăнакан рабочисемпе работницăсене ĕç меслечĕсене тата кашни сехет вăхăтпа усă курма вĕрентес пулать. Йывăç юхтарас ĕçе мобилизациленĕ çынсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе тивĕçлипе туса пымалла. Ĕç дисциплинине çирĕплетмелле. Пĕр çын та хăйĕн заданине тултармасăр ĕçрен пăрăнни ан пултăр. Кунпа пĕрлех йывăç турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен предприятисемпе районсен руководителĕсен ĕçлекенсене ĕç условийĕсем туса парассишĕн çеç мар, вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн те тăрăшмалла. Леспродторгсен столовăйсене йĕркеллĕн ĕçлеттермелле. Йывăç юхтарнă çĕрте ĕçлекенсем валли халех хваттерсем хатĕрлесе хумалла, вĕсене санитари тĕлĕшĕнчен тасатса тухмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йывăç юхтаракан организацисен руководителĕсене çак ĕçе тăван çĕршыв умĕнчи ответлăха туйса, ăнăçлăн туса ирттерме хушрĕç, иртнĕ çулсенчи йăнăшсене урăх тумалла марри çинчен çирĕппĕн асăрхаттарчĕç. Пĕлтĕр çак ĕçре тĕрлĕ чăрмавсем пулнă пирки, сулăсене тытса чарса йывăçа сыран хĕрне кăларасси вăраха тăсăлнă. Савăн пирки юхтарнă йывăçсене кирлĕ çĕре вăхăтра çитерменни тата çухатнисем те пулнă.

Йывăçа шывпа юхтарас ĕçе хутшăнакан организацисен, вырăнсенчи партипе совет организацийĕсен, уйрăмах Улатăр, Шупашкар хулисен, Улатăр, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Етĕрне, Сĕнтĕр районĕсен руководителĕсен йывăç юхтарас кампанине ăнăçлăн ирттерессишĕн большевикла кĕрешмелле. Ку ĕçе вăраха яни пулмалла мар.

Çĕршывра халĕ май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн саралса пырать. Пирĕн республикăри промышленность предприятийĕсем те аслă уява производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Йывăç юхтарас тĕлĕшпе ĕçлекенсен те май уявĕ умĕнхи ăмăртура чаплă çитĕнÿсем тумалла. Йывăç юхтарас ĕçе кăтартуллăн ирттерсе, фронтпа çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлар!

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсене ответлесе

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çакăн пек обязательствăсем илнĕччĕ: апрель уйăхĕнчи производство планне срокчен 5 кун малтан тултармалла, тракторсем валли запаслă пайсем тумалли задание апрелĕн 28-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла, майăн 1-мĕшĕ тĕлне комсомолецсемпе çамрăксен 15 фронтовой бригадине организацилемелле т. ыт. те.

Рабочисемпе работницăсем илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн стахановла вăхтăна тăчĕç. Кинсбургский юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ, март уйăхĕнчи задание 113 процент пурнăçланăскер, апрель уйăхĕнче те кăтартуллăн ĕçлет. Вăл 10 кунхи задание 150 процента яхăн пурнăçланă. Çавăн пекех Просяк юлташ начальник пулса ĕçлекен цех та хăйĕн обязательствисене тимлĕн пурнăçласа пырать. Март уйăхĕнчи задание 109,5 процент пурнăçланăскер, вăл апрель уйăхĕнчи производство планне 20 кун хушшинче пурнăçлама пулчĕ.

Заводри коммунистсем, ĕçĕн организаторĕсем пулса, май уявĕ умĕнхи ăмăртура паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Хворост, Францман, Трубачев, Нерубенко, Ковалишин коммунистсем, ĕç вăхăчĕпе туллин усă курса, кулленхи задание икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Заводра комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем шихăçанхинчен те тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Леонтьевăпа К. Шимлых юлташсем ертсе пыракан фронтовой бригадăсем уйрăмах аван ĕçлеççĕ. Çак бригадăсенче ĕçлекенсем кашниех кулленхи задание 200—250 процент таран тултараççĕ.

Завод коллективĕ Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне çак уйăхра хăй аллине илессишĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешет.

Ф. МАЛЫШКИН.

Уйăхри задание 120 процент тултарассишĕн

Шупашкарти «Чебторгин» артель пĕрремĕш кварталти планне срокчен пурнăçларĕ. Март уйăхĕнче пĕтĕм продукци кăлармалли задание 113 процент, куллен кирлĕ таварсем кăларас енĕпе задание 114 процент чухлĕ тултарнă. Уйрăмăнах 1-мĕш кварталта атă-пушмак çĕлекен тата çыхакан цехсем аван ĕçленĕ. Ефимов. Варламов, Гуляев стахановецсем ĕç нормине тăтăшах икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Коллектив апрель уйăхĕнчи задание 120 процента çити тултарма обязательство илнĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿссех пырать

КАНАШ, апрелĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем май уявĕ умĕнхи ăмăртура ытхăçанхинчен патварлăрах ĕçлесе, кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Коломиец, Забиякин, Соколовский юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсем апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне уйăхри задание 53 процент ытла пурнăçларĕç. Кунти машинистсем Троченко, Бойко, машинистсен помощникĕсем Алексеев, Андрианов юлташсем, стахановла вахтăна тăрса, хăйсен сменинче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Завод коллективĕ май уявĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса ярса, ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пырать. Апрель уйăхĕнчи задание 110 процент чухлĕ пурнăçлама пулчĕ.

А. ЕГОРУШКИН,
Партбюро секретарĕ.

Ирĕке кăларнă Винницăри митинг

Винница облаçне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă ятпа Винница хулинче апрелĕн 12-мĕшĕнче митинг пулса иртнĕ.

Партизансен, рабочисен тата интеллигенци представителĕсем Винница облаçне фашистла пусмăрлăхран ирĕке кăларнăшăн Хĕрлĕ Çара тата Сталин юлташа тав тунă.

Митинг çав тери хавасланса Сталин юлташа, Хрущев юлташа тата Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене ăшă салам ăсатса çырусем йышăннă. (ТАСС)

ЮЛАШКИ ХУТ ÇАР ХИСЕПĔ ТУПИ

Апрелĕн 17-мĕшĕнче, 18 сехетре, Совет Союзĕн çарĕн флочĕ çав тери чаплă армин генералĕн **Н. Ф. Ватутинăн** тупăкĕ умĕнче хăйсен боевой ялавĕсене тайрĕç.

Н. Ф. Ватутина пытарнă сехетре, пĕрре кăларнă Киевăн çĕрĕ ăнăн ÿтне йышăннă вăхăтра, Мускавра, Верховнăй Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ панă приказ тăрăх, çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, траурлă салют панă. Пирĕн Тăван çĕршывăн столици Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă полководецне юлашки хут çар хисепĕ тунă. Совет халăхĕ Н. Ф. Ватутина ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ.

Салюта радиопа панă. (ТАСС).

ÇУРКУННЕХИ УЙХИР ĔÇĔСЕНЕ ВĂХĂТРА ПУÇĂНАР!

„Пионер“ колхоз çуракине хатĕр

СĔРПУ. Çак кунсенче Кăшаркасси ялсоветне кĕрекен колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине пăхса тухрĕç. Пăхса тухнă хыççăн «Пионер» колхоз çуракине тухма пĕтĕмĕшпех хатĕрри курăнчĕ.

Тырă ăнса пуласси — вăрлăхран нумай килет. Çавăнпа «Пионер» колхоз вăрлăх çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă, ăна сортласа тасатса, акма юрăхлă туса хунă. Вăрлăха пăхса усрама тата сăнаса тăма М. Владимирова юлташа уйăрнă.

Суракине кирлĕ ялхуçалăх инвентарĕсене — шăпăрсене, сеялкăсене, сÿресене юсаса çитернĕ.

Колхоз тимĕрçи Илья Семенов, 2-мĕш группăри инвалид пулсан та, вăрçă вăхăтне асра тытса, хăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлет.

Суракине ăнăçлăн ирттересси — лаша вăйĕнчен те нумай килет. «Пионер» колхозăн малтанхи вăхăтра лашасем валли сĕлĕ сахалтарах пулнă пирки, лашасем начартарахчĕ. Вара председатель Ф. Федоров лашасем валли тырă колхозниксенчен пухма шухăшларĕ. Унăн паха шухăшне колхозниксемпе колхозницăсем ăшшăн йышăнчĕç. 2—3 кун хушшинче 300 пăт тырă пухăнчĕ. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Данилова 9 пăт, 65 çулхи колхозник П. Иванов 5 пăт, 70 çулхи колхозник-активист П. Филиппов 12 пăт пачĕç.

Çакна пула лашасене халь 2-шер килограмм тырă параççĕ. 2-мĕш бригадăн лашисем уйрăмах аван. Конюхĕ—Пелагея Окунева. Вăл лашасене юратса пăхать.

«Пионер» колхоз ялсоветне кĕрекен Буденный ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртать. Ăмăртура «Пионер» колхоз мала тухни курăнчĕ.

И. АНДРЕЕВ,
Л. ВЛАДИМИРОВ.

Вăкăрсене ĕçе вĕрентеççĕ

ЭЛĔК. Туртăм вăйĕ ялхуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă. Çакна шута илсе, колхозсенче вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене ĕçе вĕрентес ĕçпе ăнăçлăн ĕçлерĕç. Мăн Вылăри «Красная Заря» колхозра 9 вăкăра, Мăн Тукташри Горький ячĕпе тăракан колхозра 5 вăкăра, Арзаматри Киров ячĕпе тăракан тата «Красный Октябрь» колхозсенче 3-шер вăкăра кÿлсе çÿреме вĕрентнĕ. Районĕпе паянхи кун тĕлне 178 вăкăра кÿлсе çÿреççĕ.

(Хамăр корр.).

Хире тухас умĕн

Вăрман енчен лăпкă та ăшă çил вĕрет. Ĕнерхи пекех, янкăр уяр çанталăк тăрать.

Сырмара хĕрсем пир, кĕпе-йĕм çăвасçĕ, арçынсем колхоз амбарĕсем умĕнче ĕçлеççĕ. Шуртре ларакан çын çук та пуль паян Хирпуçĕнче.

7-мĕш бригадăн бригадирĕ Иван Осипов, ырăн колхозра тĕрĕслÿ пулать теминĕ илтсен, хăй бригадинчи машинăсен сарайне васкарĕ. «Пурте çителĕклĕ пек», — шухăшларĕ вăл. Икĕ касăллă 4 плуг, пĕр сеялка тата сÿресем пĕтĕмпех хатĕр, вĕсене юсаса, тасатса çу сĕрсе лартнă. Вĕрен-пăявсем, турттасем, хăмăт-ĕнерчĕксем те ытлашшипех пур. 17 лаша валли 72 урхалăхпа пăяв, 33 хăмăт хатĕрленĕ. Суракинче ĕçлеме ĕç вăйне те тĕрĕс уйăрса хунă. Пĕтĕм тырпула бригада 6—7 кун хушшинче акса пĕтерме шутлать.

Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытти бригадăсенче те пысăк ĕçсем туса иртттернĕ. Колхоз организациленĕренпех бригадирта ĕçлекен Степан Кузьмич бригади, ĕçре ялан малта пынăскер, вăйлă тырпулшăн кĕрешме иртнĕ çултах тытăннă. Бригада членĕсем хĕллех пур вăрлăхсене те сортласа хунă, ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене юсанă.

Иртнĕ çулта 5-мĕш бригада кашни гектартан вăтам шутпа 14 центнер тырă туса илнĕ. Кăçал бригада членĕсем хăйсем умне гектартан 150 пăтран кая мар тырă илес задачăна лартрĕç. Вĕсем хĕллехи вăхăтра кăна, çĕре ытларах имçам парас тесе, 1.700 лав тислĕк, 13 центнер кĕл, 3 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлерĕç.

— Фронтри пек ĕçлессĕ теме юрать пирĕн колхозниксене. Эпир вĕт çулсерен тырпул тухăçлăхне ÿстерсе пыратпăр. Манăн бригада та ку енĕпе юлсах пымасть, — тесе каласа парать бригадир Степан Кузьмич.

Çапла каласçĕ ытти бригадирсем те. Мĕншĕн тесен кашни бригадăрах колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпул туса илессишĕн вăя хурса кĕрешеççĕ. Вĕсем тăрăшса ĕçленĕрен ĕнтĕ «Победа» колхоз иртнĕ çулта ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пынă, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тата ытлашшипех пурнăçланă. Кунсăр пуçне колхозниксем хăйсен запасĕнчен тата обществăллă фондран государствăна 1352 центнер тырă сутнă.

Анчах иртнĕ çулти çитĕнÿсемпе колхозниксем лăпланмаççĕ. Вĕсен шухăшкăмăлĕ çапла: кăçал пĕлтĕрхинчен лайăхрах ĕçлесе тата ытларах тырпул туса илмелле, фронтпа çĕршыва ытларах тырпул памалла. Çак шухăш-кăмăлпа ĕçлесе, вĕсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. 455 гектар акмалли çĕр лаптăкĕ валли таса та лайăх шăтакан вăрлăх хатĕрленĕ, пур ялхуçалăх машинисене те тĕплĕн юсаса çитернĕ. Суракинче ĕçлеме уйăрнă 77 лаша тата 16

«Победа» колхоз председателĕ **П. А. Андреев** юлташ.

тиха валли 44 центнер сĕлĕ, 175 пăт посыпка тата утă хатĕрленĕ, хăмăт-ĕнерчĕк, урапа тата ытти ут таврашĕсем те ытлашшипех пур.

Колхоз уя 6.900 лав тислĕк кăларчĕ, 140 центнер кĕл, 100 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлерĕ.

Колхоз çуракине ирттерме ĕç планне тунă. Ăна колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе явнă. Сухара, сÿрере, акнă çĕрте тата вăрлăх турттарнă çĕрте кам ĕçлемеллисене тĕплĕн кăтартса панă, колхозниксем çумне лашасем çирĕплетнĕ. Çав лашасем валли халь колхозниксем хăйсен запасĕнчен сĕлĕ, утă пухса пачĕç, лашасене уйрăм апат çине тăратнă.

Çуракин малтанхи кунĕнчех уйра ĕçлекенсем валли столовăй уçăлать, унта кунне виçĕ хутчен апатланма палăртнă. Сухаçсемпе пĕрлех уя агитаторсемпе вулавçăсем те тухмалла, вĕсем куллен ĕçлекенсем хушшинче калаçусем ирттермелле, стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăлармалла.

— Кăçал çуракине ытти çулхинчен организованно ирттерме шутлатпăр. Колхозниксем кăçал та хамăрпа ăмăртакан «Малый Цивиль» колхозран мала тухасса шантараççĕ, — терĕ колхоз председателĕ П. А. Андреев юлташ.

Чăнах та çапла, «Победа» колхоз паян тесен паянах акана тухма хатĕр. Ăна çак кунсенче пулса иртнĕ тĕрĕслÿ лайăх кăтартса пачĕ.

Х. ЛИСИН,
Е. ВОЛКОВ.
Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоз.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем 1944 ÇУЛХИ АПРЕЛĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Апрель уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Красноармейски	100,0	—
Комсомольски	100,0	—
Шăхасан	100,0	—
Йĕпреç	100,0	—
Елчĕк	101,6	—
Ишлей	100,0	—
Шупашкар	100,0	—
Куславкка	100,0	—
Сĕнтĕрвăрри	100,0	200,0
Вăрнар	100,0	—
Элĕк	100,0	—
Хĕрлĕ Чутай	100,0	—
Первомайски	100,0	—
Сĕнтĕр	100,0	—
Вăрмар	100,0	—
Чкаловски	100,0	—
Çĕмĕрле	100,0	—
Тăвай	102,3	100,0
Канаш	100,0	300,0
Етĕрне	97,4	26,0
Шăмăршă	97,0	—
Кувакино	95,7	88,8
Çĕрпÿ	93,2	—
Улатăр	82,5	171,4
Пăрачкав	65,1	22,2
Пĕтĕмпе	96,3	45.4
Апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне пулнă	95.0	38,9

Клевер акма тытăнчĕç

ТĂВАЙ, апрелĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри уйрăм колхозсем кĕрхи калчасене тислĕк шывĕпе, кĕлпе тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе апатлантарма пуçăнчĕç. Паян «Красная Чувашия» колхоз 20 гектар, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 10 гектар çинчи кĕрхи калчасене апатлантарчĕç. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз клевер акма тытăнчĕ.

Колхозсен вăрлăх çителĕклĕ. Çитмен вăрлăхсене колхозниксем хăйсен запасĕсенчен хываççĕ, çак ĕçе пурĕ 352 колхозник хутшăнчĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем 252 пăт пачĕç.

Г. КУРАКИН,
Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Упранса юлнă силос

ОКТЯБРЬСКОЕ. Иртнĕ çулта Наратчаккинчи «Красное Сормово» колхоз членĕсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли силос нумайрах хывса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлерĕç. Вĕсем 95 тонна силос хатĕрлесе хăварчĕç. Çав силос халь выльăхсене çитереççĕ. Силос лайăх упранса хĕл каçнă. Выльăхсем ăна юратса çиеççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 17-мĕшĕнче КИШИНЕВ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, ДНЕСТР шывĕн сылтăм хĕрринче тытса илнĕ плацдармсене аслăлатассишĕн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

СЕВАСТОПОЛЬ енче пирĕн çарсем, Крымăн кăнтăр сыранĕнчи туллă-вăрманлă пайĕнче тăшман хирĕç тăнине тата унăн инженерла чăрмавĕсене çĕнтерсе пырса, малалла наступлени туса пынă. Тăшманпа çапăçса МЕКЕНЗИЯ, ЧЕРКЕЗ-КЕРМЕН, УППА, УЗЕНБАШ, ВЕРХНИЙ ЧОРГУНЬ, МУХАЛАТКА, МЕЛАС, ФОРОС, БАЙДАРЫ, ВАРНУТКА ялĕсене йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче темиçе пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 60 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 62 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ГАЛАЦ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔПЕ ЮХАНШЫВ ПОРТНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Апрелĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçете вĕçекен авиаци **Галац** чугун çул узелĕпе юханшыв портне (Румыни) йышлăн вĕçсе кайса тапаннă. Бомбăсем пăрахнине пула чугун çул узелĕнче пушарсем нумай тухнă, вăйлă взрывсем пулнă. Пушарсем, сарăлса пырса, чугун çул узелĕн чылай пысăк пайне ярса илнĕ, çар эшелонĕсем тата çар склачĕсем çуннă. Рейдра тата причалсем патĕнче тăнă суднăсем çине бомбăсем тÿрех ÿкнине палăртнă. Рейдра тăнă икĕ карап çинче вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

* * *

Кишинев хули енче пĕр соединени чаçĕсем Днестр шывĕн сылтăм енчи плацдармсене аслăлатассишĕн çапăçнă. Пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен отрядсем тăшман тылне кĕрсе кайнă та нимĕç çарĕсен пĕр ушкăнне сасартăк тылран пырса çапнă. Совет танкисчĕсем, вут-çулăм тăкса тата гусеницăсемпе таптаса, гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, темиçе бронетранспортер тата тĕрлĕ япаласем тиенĕ 100 лава пĕтерсе тăкнă. Ăнăçлă операци туса ирттерсе, совет чаçĕсем меллĕ позицисем йышăннă.

* * *

Севастополь хули енче пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă. Вырăнти хÿтĕлеме меллĕ условисемпе усă курса, нимĕçсем Бельбек шывĕ тăрăх тата Черная шывĕнчен хĕвелтухăçнерехри тата сурçĕр-хĕвелтухăçнерехри çÿллĕ вырăнсем çинче вăйлă тĕрекленĕ позицисем туса хунă. Оборонăн çав питĕ вăйлă тăрăхĕпе усă курса, тăшман питĕ хытă хирĕç тăнă. Пирĕн çарсем, артиллерин вут-çулăмĕпе хÿтĕленсе, малалла куçса пынă, гитлеровецсене темиçе ялтан хăваласа кăларнă. Тăшман пысăк çухатусем тÿснĕ. Пĕр участокра кăна пирĕннисем 1000 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр районра пирĕн штурмлакан отрядсем тавра-ри çÿллĕ вырăна йышăнса илнĕ, çавна йышăннă чухне тăшманăн 7 артиллери батарейине тытса илнĕ.

Пирĕн çарсем Крымăн кăнтăр сыранĕ тăрăх çапăçса пырса малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Байдары ялне йышăннă. Байдары ялне йышăнни Балаклавăпа Севастополь патне кăнтăр-хĕвелтухăç енчен пымалли çула уçса парать. Пирĕн çарсем хăваласа пынипе, нимĕçсем çулсем çинче хĕçпăшалсемпе çар материалĕсем нумай пăрахса хăвараççĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем кун каçиччен 39 тупă, 108 пулемет, 23 миномет, 87 автомашина тата çар материалĕсем тиенĕ пысăк обоз тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинче çапăçакан çарсене активлăн пулăшать. Совет летчикĕсем тăшман çарĕсене тăтăшах пыра-пыра çапнă. Сывлăшри çапăçусенче тата Херсонес сăмсахĕ çинчи аэродромра пирĕн летчиксем нимĕçсен 10 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хура тинĕс çинчи флотăн сывлăшри разведки ирхине тинĕсре тăшман суднисен караванне курнă. Караванра пĕр транспорт, хăварт çÿрекен 3 десант баржи тата хурал тăракан 2 катер пулнă. Вĕсем Севастополь патнелле кайнă. Флотăн авиацийĕ тăшман суднисене штурмласа бомбăсем пăрахнă та 3.000 тонна таякан транспортне тата хăварт çÿрекен пĕр десант баржине шыва путарнă. Сав караванри ытти суднăсене сиенленĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра генерал-майор Красовский ертсе пыракан летчиксем икĕ кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 30 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Полесье облаçĕнче кĕрешекен белорус партизанĕсен темиçе отрячĕ мартăн иккĕмĕш çурринче нимĕçсен 12 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Шоссе çулĕсемпе ахаль çулсем çинче совет патриочĕсем пĕр танк, 15 автомашина тата боеприпассем тиенĕ 6 лава пĕтерсе тăкнă. Вилейка облаçĕнчи партизансен Чапаев ячĕпе тăракан отрячĕ мирлĕ совет çыннисене вăйпа хăваласа каякан нимĕç полицейскийсене тапăннă. Партизансем 40 гитлеровеца вĕлернĕ те Германие каторгăна хăваласа каякан совет гражданĕсене ирĕке кăларнă.

* * *

Фашистла нимĕç захватчикĕсем тата вĕсен Румынири хÿрешкисем Румыни фронт сывăхĕнчи халăхĕсене Хĕрлĕ Çар çинчен тĕрлĕ суя сăмах сарса хăратаççĕ. Çав суя пропагандăна пула Румыни хăшпĕр хулисемпе ялĕсенчи халăхсем вăрмансене тарнă. Анчах та Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе тĕл пулсанах румын çыннисем хăйсене Гитлер провокаторĕсем ирсĕррĕн улталанине пĕлеççĕ. Пĕр-икĕ кун иртсен вăрмана тарса кайнă çынсем килĕсене таврăнаççĕ те вара ялсенчи пек пурнăçах пуçланса каять.

Малта пыракан совет чаçĕсем Стефанешти хулине кĕрсе кайсан, çав хула урамĕсенче никам та пулман, лавкасемпе магазинсен алăкĕсемпе витринисене питĕрсе лартнă е хăмапа çапса хунă. Икĕ сехет иртсен пĕр старикпе карчăк аллисене тăратса урама тухнă. Вĕсем хăранипе икĕ енне те пăхса пынă, тĕп урампа пынă. Хăйсене никам та тивменнине курсан, каялла кайнă. Тата пĕртак вăхăт иртсен, вăрмантан, çуртсенчен тата хÿтлĕхсенчен халăх нумай хăпăнса тухнă. Совет боецĕсемпе тĕл пулсан, румын çыннисем урамăн тепĕр енне каçнă, аллисене тăратнă, шурă тутăрсем сĕкленĕ. Хăйсене никам та тивменнине курсан, румынсем вара йăлтах лăпланнă. Халĕ хулара ялан-хи пек пурнăçах пуçланса кайнă—лавкасем, магазинсем, мастерскойсем, парикмахерскисем уçăлнă. Пирĕн çарсем йышăннă Верза ялĕнче те хресченсем пурте хăйсен килĕсене таврăннă. Хăйсен хуçалăхĕпе пурлăхне никам та тивменнине курсан, фашистла плакатсене стенасем çинчен сура-сура илме пуçланă. Чиорногату ялĕнче румын хресченĕ Василе Косвану çапла каласа панă: «Вырăссем сирĕн çуртсене çунтараççĕ, хăвăра вĕлереççĕ, тесе калатчĕç пире. Халĕ эпир çак сăмахсем нимĕçсен суя сăмахĕсем пулнине куртăмăр. Хĕрлĕ Çарăн салтакĕсем — культурăллă çынсем. Вĕсем мирлĕ халăхпа лайăх пуранаççĕ. Эсир килсен малтан эпир хăранăччĕ, халĕ ĕнтĕ эпир сире чунтан-чĕререн юратрăмăр». Редеушчи ялĕнчи хресчен Ион Бодяну пирĕн çарсем пынă вăхăтра вăрманта пытанса пурăннă. Каçпала киле таврăнсан, вăл хăйĕн ялĕ çаплипех ларнине, хăйĕн çуртне никам та пырса кĕменнине курнă. Çакă ăна тĕлĕнтерсех янă. Бодяну çапла каланă: «Пире Хĕрлĕ Çар сирĕн ялсене çунтарса ярать, хăвăра пурне те вĕлерсе пĕтерет тесе калатчĕç. Çавăнпа эпĕ, хамăн пĕтĕм хуçалăха пăрахса, вăрмана тартăм. Киле таврăнсан эпĕ манăн пĕтĕм хуçалăх çаплипех сыхланса юлнине куртăм».

Румынсен Хĕрлĕ Çар йышăннă хулисемпе ялĕсенчи халăхсем пурте нимĕçсене курайманни, вĕсене çак ирсĕр вăрçăшăн айăплă çынсем тесе шутлаççĕ.

КОМСОМОЛ ПУРНӐҪӖ

Вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешетпӗр

Районри комсомолецсемпе ҫамрӑксем ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе мӗнпур вӑя хурса ӗҫлеҫҫӗ. Районри 670 комсомолецран 418-мӗшӗ ҫуракине хатӗрленӗ ҫӗрте тӳрремӗнех хутшӑннӑ. Вӗсенчен тимӗрҫӗсем пулса 18 ҫын, ялхуҫалӑх инвентарӗсем юсанӑ ҫӗрте 84 ҫын, вӑрлӑхсем сортланӑ ҫӗрте 48 ҫын, вӑкӑрсене кӳлме вӗрентес ӗҫе 52 ҫын, конюхсем пулса 51 ҫын, уя тислӗк кӑларнӑ ҫӗрте 112 ҫын, агрокружок руководителӗсем пулса 53 ҫын ӗҫлерӗҫ.

Ялхуҫалӑх машинисемпе транспорт инвентарӗсене лайӑх пахалӑхпа юсас тесе, районра комсомолецсемпе ҫамрӑксенчен уйрӑм бригадӑсем организацилерӗмӗр. Ҫав бригадӑсем 184 плуг, 17 трактор, 42 сеялка, 6 культиватор юсарӗҫ. МТС-ри бригада мӗнпур тракторсене юсаса пӗтернӗ хыҫҫӑн колхозсене кайса 30 плуг, 6 сеялка, 2 культиватор юсаса пачӗ.

Вӑрлӑх сортлас тӗлӗшпе те уйрӑм бригадӑсем ӗҫлерӗҫ. Вӗсем пӗтӗмпе 8.280 центнер вӑрлӑх сортланӑ. Кӑҫал колхозсен акмалли вӑрлӑхсем ҫителӗклӗ.

Пуринчен ытла, пире туртӑм вӑйӗ нартарахххи канлӗх памастчӗ. Ҫак ҫитменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе те эпир чылай ӗҫсем турӑмӑр. Чи малтанах ку ыйтупа комсомол активӗн районри пухуне ирттертӗмӗр. Ун хыҫҫӑн комсомол активӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗҫӗн работникӗсемпе пӗрле ялсене кайса канашлусем ирттерчӗ. Выльӑх апачӗсене мӗнле расходланине тӗрӗслесе тӑма 43 колхозра комсомолецсен тӗрӗслӳ постӗсем турӑмӑр. Вӗсене конюхсем сумне ҫирӗплетнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн лашасене пӑхасси чылай лайӑхланчӗ. Лашасем вилесси те чакрӗ.

Комсомолецсем ӗне-выльӑхсене ӗҫе вӗрентес тӗлӗшпе те тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Комсомолецсемпе союзра тӑман 130 ҫамрӑк районӗпе 421 ӗне-выльӑха ӗҫе вӗрентнӗ. Вӑл шутран «Марс» колхозра 28 вӑкӑра, Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра—22 вӑкӑра, «Вперед» колхозра—18, «Осоавиахим» колхозра—10 вӑкӑра ӗҫе вӗрентнӗ.

Вырӑнти удобренисем хатӗрлемелли уйӑхлӑха комсомолпа пионер организацийӗсем (пӗтӗмпе 538 комсомолец, 1.726 пионер) активлӑн хутшӑнчӗҫ. Ҫак уйӑхлӑхра уя 81.700 лав тислӗк, 150 центнер фекали кӑларнӑ, 1.206 центнер кӗл, 1069 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ.

Ҫуракине хатӗрленес енӗпе комсомолӑн Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри пуҫламӑш организацийӗ лайӑх ӗҫлерӗ. Унта пурӗ 12 комсомолец. Вӗсем ялхуҫалӑх машинисене юсанӑ, вӑрлӑхсене сортланӑ. Уя 6.300 лав тислӗк кӑларнӑ, 51 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 30 центнер кӗл пухнӑ, 22 вӑкӑра ӗҫе вӗрентнӗ. Кашни комсомолец хӑй ӗҫӗшӗн комсомол организацийӗ умӗнче ответлӑха тӳйса тӑнӑ. Ҫавӑнпа та кашниех ӗҫре паттӑр пулма тӑрӑшнӑ. Ҫӑмахран, В. Портнова А. Баранов юлташсем уя 480 лав тислӗк тӑкнӑ. Е. Портнов 20 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 18 центнер кӗл пухнӑ.

Анчах та, пӗтӗмӗшпе илсен, ҫуракине хатӗрленес ӗҫре ҫитменлӗхсем те пур-ха. Хӑшпӗр колхозсенче ҫӗрулми тата ытти пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем ҫитмеҫҫӗ. Лашасене пур колхозсенче те кирлӗ пек тыткаламаҫҫӗ-ха.

Пирӗн задача ҫак ҫитменлӗхсене халех пӗтерсе, ҫуракине кӗске вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа ирттересси пулса тӑрать.

А. ПАВЛОВА,
ВЛКСМ Елчӗк райкомӗн секретарӗ.

Комсомолец Петр Тарганов

Ҫамрӑк комсомолец Петя Тарганов Ҫӗмӗрле комбинатӗнче ҫамрӑксен фронтовой бригадин бригадирӗ пулса ӗҫлет. Вӑл ертсе пыракан бригадӑри рабочисем кашниех хӑйсен специальноҫне лайӑх вӗренсе ҫитнӗ. Вӗсем кашни минутпа туллин усӑ курма пӗлеҫҫӗ. Бригадӑри кашни рабочи икӗ ҫын нормине тултарса пырать.

Бригада тухӑҫлӑ ӗҫлени рабочисем пӗрпӗрне вӗрентсе тата пулӑшса пынинчен килет. Пӗр-пӗр заказа тунӑ чухне каман та пулсан инструмент ҫӗмӗрӗлсен е тата урӑх чӑрмавсем пулсан, ыттисем ӑна хӑвӑрт пулӑшаҫҫӗ. Бригадир вӗрентнипе, акӑ, 16 ҫулхи Ф. Миномет юлташ икӗ уйӑх хушшинче специальноҫть илме пултарчӗ. Халь вӑл ыттисем пекех тухӑҫлӑн ӗҫлет.

Тарганов юлташӑн бригадинче пурте комсомолецсем. Ҫак фронтовой бригада ҫинчен халь цех коллективӗ ҫеҫ мар, пӗтӗм комбинат пӗлет. Комбинатра тухса тӑракан хаҫат вара час-часах хӑйӗн страницисенче пӗтӗм рабочисене ҫак ҫамрӑк патриотсенчен пример илсе ӗҫлеме чӗнет. «Вӗсем фронтовиксемпе танлашаҫҫӗ. Хуть те мӗнле задани парсан та, ӑна срокчен пурнӑҫлаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен вӗсем вӑхӑтпа туллин усӑ курса, вӑя хурса ӗҫлеҫҫӗ», тесе ҫырать хаҫат.

Цеха кӗрсен, кӑтарту хӑми куҫа курӑнса каять. Ӗҫ пуҫланас умӗн е кӑнтӑрлахи апат вӑхӑтӗнче рабочисем ялан ун тавраҫӗнче. Вӗсем ӗнерхи кун кам мӗнле ӗҫленине пӑхма пуҫтарӑнаҫҫӗ. Хӑма ҫинче—Петр Тарганов ӗнер 230 процент тултарнӑ, тесе ҫырнӑ пулсан, паян вӑл цифра 367 ҫитнӗ.

— Ӑна ҫитекенсем сахал. Костин та ӑна ҫитеймест, — ытӗпет саҫӑ.

Апат вӑхӑчӗ иртет. Рабочисемпе работницӑсем ӗҫ вырӑнӗсене саланаҫҫӗ. Петр Тарганов бригади паян тата пысӑкрах ӗмӗтпе ӗҫе тытӑнать. Ӑна ӗҫ пуҫланас умӗн ҫех мастер Нефедов васкавлӑ задани пачӗ. Вӑл—3 кун хушшинче тумалли заказ. Ӑна ҫамрӑк патриотсем, пӗр талӑк хушши пехран тухмасӑр ӗҫлесе, срокчен пурнӑҫлама сӑмах пачӗҫ.

Комбинатра халӗ ҫамрӑксем пысӑк вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Юлашки 2—3 уйӑх хушшинче кӑна кунта ҫамрӑксенчен темиҫе вунӑ фронтовой бригадине организациленӗ.

СӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.).

СРОКЧЕН ПАРСА ТАТАҪҪӖ

СӖНТӖРВӐРРИ. Районри колхозниксемпе колхозницӑсем мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑрҫӑ фронтӗнчи чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса, Хӗрлӗ Ҫара куллен пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Колхозниксем государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен пурнӑҫлаҫҫӗ. Ҫӑмахран, Юртакассп ялсоветӗнчи «Искра» колхозри колхозниксем: А. Меркурьева, К. Комиссаров, Н. Семенов, Е. Веркилева юлташсем 1944 ҫулта ҫӑмарта памалли плана паянхи куна 50 процент тултарчӗҫ. Вӗсем сӗт-ҫу, аш-какай памалли обязательствӑсене те срокчен пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ.

Пионервожатӑйсене куллен вӗрентсе пымалла

Шкулсенчи комсомол организацийӗсен кирлӗ задачисенчен пӗри вӑл — ачасене вӗрентсе воспитани парас ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек туса пыма пӗлекен вожатӑйсен кадрӗсене суйласа илсе хатӗрлесси пулать. Ачасен ӑс-тӑнне пӗлсе, вӗсен кӑмӑлне шута илсе каласма пултаракан, вӗсене малалла аталаса пыма пулӑшакан вожатӑй кӑна воспитани ӗҫне тивӗҫлипе ертсе пыма пултарать.

Каласа пулать, ӗҫлеме пултаракан вожатӑйсене суйласа илни ӗҫӗн пуҫламӑшӗ кӑна пулать-ха. Вӗсене хӑйсен пӗлӗвӗсене ӳстерсе пулӑшса пымалла. Пионервожатӑйсене ӗҫре ертсе пымалла, вӗсемпе семинарсем ирттермелле. Ҫав семинарсене комсомол райкомӗсемпе хула комитечӗсем ирттереҫҫӗ. Семинарсен занятийӗсенче педагогикӑпа методика ыйтӑвӗсене вӗрентмелле, шкул тулашӗнчи ӗҫсен (костерсемпе сборсен) уйрӑм енӗсене илсе практикӑллӑ занятисем ирттермелле. Ҫак ӗҫ уйрӑмӑнах ҫӗнӗ пионервожатӑйсемшӗн усӑллӑ пулӗ.

ВЛКСМ Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ тӑрӑх, кӑҫалхи январьпе февраль уйӑхӗсенче республикӑри хуласемпе районсенче пионервожатӑйсен виҫӗ кунлӑх семинарӗсене ирттернӗ. Унтан пӗтӗмпе 600 вожатӑй вӗренсе тухнӑ. Семинарсене ВЛКСМ Улатӑр (секретарӗ Спичков), Канаш (секретарӗ Напрасный) горкомӗсемпе Шӑмӑршӑ райкомӗ (секретарӗ Матвеева юлташ) кӑтартуллӑн ирттернине палӑртмалла. ВЛКСМ Шӑмӑршӑ райкомӗ семинар вӑхӑтӗнче пионервожатӑйсем валли кӑтартуллӑ сбор ирттернӗ. Ун хыҫҫӑн сборӑн лайӑх енӗсемпе ҫитменлӗхӗсем ҫинчен сӳтсе явнӑ. Пионервожатӑйсем семинарта пӗрпӗрин ӗҫ опычӗсемпе паллашнӑ. Семинар пӗтнӗ хыҫҫӑн вожатӑйсем «Совет Союзӗн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хару-тӑравӗ ҫинчен» доклад итленӗ.

Ҫавӑн пекех Шупашкар хулинче те, Красноармейски районра та семинар вӑхӑтӗнче кӑтартуллӑ сборсем ирттернӗ.

ВЛКСМ Сӗнтӗр райкомӗ март уйӑхӗнче пионер дружинисен штабӗн начальникӗсен семинарне ирттернӗ. Вӗсем мӗнпур ыйтусене вырӑнти фактсемпе ҫыхӑнтарса пынӑ, ӗҫ планӗсем тунӑ.

Шупашкар хулинчи вӑтам шкулсенче ӗҫлекен старши пионервожатӑйсем — Стешова, Шигаева юлташсем пединститутра заочнӑ вӗренсе педагогикӑллӑ пӗлӳ илеҫҫӗ.

Анчах та Ишлей, Чкаловски, Пӑрачкав райкомӗсем старши пионервожатӑйсемпе отряд вожатӑйӗсене суйласа илес тата вӗсене тӗрӗс воспитани парас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем паянхи куна ҫитсе те вожатӑйсен вӗренӗвне йӗркелемен. Ҫак фактсем райкомолсем вожатӑйсен политикӑллӑ тата пӗтӗмӗшле пӗлӗвне ӳстерессипе интересленменни ҫинчен калаҫҫӗ. Ҫавна пула чылай пионервожатӑйсем авторитетпа усӑ кураймаҫҫӗ, отрядсем начар ӗҫлеҫҫӗ, пионерсем вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймаҫҫӗ.

Пионервожатӑйсен квалификацине ӳстерсе пырас тесен, час-часах семинарсемпе канашлусем, тӗрлӗрен лекцисем, усӑ сборсем ирттермелле, шкулсемпе педагогика кабинечӗсенче пионерсен кӗтесӗсем тумалла. Вожатӑйсене — пулас учительсене—заочнӑ вӗренӗве явӑҫтарса педагогика пӗлӗвне илме пулӑшмалла.

Б. АЛЕКСЕЕВ.

Ют ҫӗршывсенче

Бадольо правительстви отставкӑна тухни

ЛОНДОН, апрелӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Неаполь хулинчен ҫапла пӗлтерет:

«Лайӑх пӗлсе тӑракан ушкӑнсенче илтсе пӗлнӗ тӑрӑх, ҫакӑ паллӑ пулчӗ: Бадольо паян ирхине короле кабинет отставкӑна тухни ҫинчен пӗлтернӗ. Король Бадольона ҫӗнӗ правительство тума хушнӑ. Анчах та ку хыпара официальнӑй йӗркепе ҫирӗплетсе пӗлтерни ҫук-ха.

Каярахпа ҫурма официальнӑй йӗркепе ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ: кабинет отставкӑна тухни ҫинчен Бадольо пӗлтернипе король килӗшнӗ. Король Бадольона ҫӗнӗ правительство тума хушнӑ. Ҫӗнӗ правительствӑна пур партисем те кӗлатӑне шута илсе тумалла.

Туринри хумханусем

ЛОНДОН, апрелӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио ҫапла пӗлтерет: Туринра ҫамаях вӑйлӑ хумханусем пыраҫҫӗ. Чылай заводсенчи рабочисем забастовка тӑваҫҫӗ. Забастовка тӑвакан рабочисене нумайӗшне тыта-тыта хупаҫҫӗ. Тытса хупнӑ рабочисене гитлеровецсем концентрацилле лагерьсене яраҫҫӗ. Турин урамӗсенче нимӗҫ отрячӗсем патрульлесе ҫӳреҫҫӗ. Апрелӗн 13-мӗшӗ ыран тепӗ чух ҫӗрле хулара тӗрлӗ тӗлте партизансемпе нимӗҫ ҫарӗсем тытӑҫа-тытӑҫа илнӗ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ПУҪЛӐХӖСЕМ ХӐЙСЕН ҪАРАТСА ПУХНӐ МУЛӖСЕНЕ ЮТ ҪӖРШЫВСЕНЕ ЯРСА ПЫТАРАҪҪӖ

НЬЮ-ЙОРК, апрелӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаҫатӑн темиҫе статьинче ҫакна кӑтартса панӑ: нацистсен пуҫлӑхӗсем хӑйсен мулӗсене вӑрҫӑчченех ют ҫӗршывсене ӑсатнӑ. Акӑлчансен Вашингтонри ответлӑ ҫыннисем каланӑ тӑрӑх, Геринг ют ҫӗршывсенче 3,5 миллион доллар ытла вырнаҫтарнӑ, Риббентроп ют ҫӗршывсен банкӗсен отделенийӗсенче 3 миллион доллар вырнаҫтарнӑ. Пӗлтӗр Америка влаҫӗсем Риббентропӑн Америкӑри пӗр ҫрех фирминчи акцийӗсене конфискацилленӗ. Риббентроп ҫав фирмӑна 1937 ҫултанпа контрольлесе тӑнӑ пулнӑ.

Гиммлерӑн Кӑнтӑр Америкӑра, Финляндире тата Сывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнче 2 миллион доллара яхӑн укҫа выртать. Гесс Бразилире 4 миллион доллар укҫа хывнӑ. Гитлеровецсен паллӑ пуҫлӑхӗн Лейӑн ют ҫӗршывсенче 2 миллион доллара яхӑн укҫа выртать. Лайӑх пӗлсе тӑракан ҫынсем каланӑ тӑрӑх, нацистсен пуҫлӑхӗсем хӑйсем Европӑри оккупациленӗ ҫӗршывсенче ҫаратса пухнӑ искусство произведенийӗсене, ҫав шутра, чи чаплӑ мастерсен произведенийӗсене, Буэнос-Айресра вӑрттӑн сутма хӑтланаҫҫӗ.

США вӑрҫа хутшӑниччченех гитлеровецсем унта хаклӑ тӑракан япаласем темиҫе миллион доллӑрлӑх куҫарнӑ пулнӑ. Америка влаҫӗсем ҫав япаласене халь контроллесе тӑраҫҫӗ, вӑхӑт ҫитсен, нацисен интересӗсемшӗн ҫав хаклӑ япаласемпе мӗнле усӑ курмаллине татса парӗҫ

ДАНИРЕ ТӐРАКАН НИМӖҪСЕН ЧАҪЕСЕНЧИ САЛТАКСЕМ ТАРНИ

ГЕТЕБОРГ, апрелӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). «Гетеборгс-постен» ятлӑ хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Данири чугун ҫулӗсемпе пыракан ҫар эшелонӗсенчи нимӗҫ салтакӗсем ытларах та ытларах тарса юлма пуҫланӑ. Пӗр станцире ҫавӑн пек тарма тӑнӑ нимӗҫ салтакне вырӑнтах персе пӑрахнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн нимӗҫ офицерӗсем, алла револьвер тытса, пур вагонсене те пӑхса тухнӑ: тараканнисене пурне те ҫапла персе пӑрахатпӑр, тесе хӑратса ҫӳренӗ. Данире ҫакӑн пек ӗҫсем те час-часах пулаҫҫӗ: нимӗҫ салтакӗсем, Совет Союзӗпе Германи фронтне ямалла тунине пӗлсен, хӑйсене хӑйсемех персе пӑрахаҫҫӗ.

ГЕРМАНИ ХАЛАХӖ ЫТЛАРАХ ТА ЫТЛАРАХ ЙӖРКЕРЕН ТУХСА ПЫРАТЬ

ЖЕНЕВА., апрелӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Гитлер ҫарӗсем Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче поражени тӳссе пынине пула, Германире вӑрҫӑра ҫӗнтерес шанчӑк сахалланнӑҫемӗн сахалланса пырать. Швейцарире тухакан «Сент Галлер Тагблат» ятлӑ хаҫат «Германире те вӑрттӑн ӗҫлекенсем пур» ятлӑ статья пичетлесе кӑларнӑ. Унта ҫапла ҫырнӑ: «Вӑрттӑн ӗҫлекенсем» тени Германире чӑн япалана пӗлтерме пуҫларӗ. Бомбӑсем пӑрахнине пула урӑх ҫӗре куҫса кайнӑ йышлӑ ҫынсем хушшинче питӗ нумай таркӑн пытанса пурӑнать. Вӗсем суя документсемпе ҫӳреҫҫӗ. Таркӑнсенчен нумайӗшӗ бомбӑсем пӑрахнӑ вӑхӑтра вилнӗ ҫынсен документӗсемпе усӑ кураҫҫӗ.

Германире «баллистика справочникӗ» ятлӑ кӗнеке сӑлатнӑ. Тӗрӗссипе ҫав кӗнекере йӑлтах урӑх япала ҫинчен ҫырнӑ, унта ҫара лекес мар тесен мӗнле майпа чирлӗ пек пулмаллине вӗрентнӗ. Ҫав кӗнекене студентсем-медиксем ҫырнӑ.

Швейцарире тухакан «Тат» хаҫат хӑйӗн Берлинри корреспонденчӗн статьине пичетленӗ. Статьяна «Германири забастовка тӑвакан хӗрарӑмсем» тесе ят панӑ. Ҫав статьяра влаҫсем Германи предприятийӗсене ӗҫлеме яракан хӗрарӑмсен пысӑкрах та пысӑкрах пайӗ ӗҫрен пӑрӑнса тарса пытанни ҫинчен каланӑ.

ЮТ ҪӖРШЫВ РАБОЧИЙӖСЕМ ГЕРМАНИРИ ЛАГЕРЬСЕНЧЕН ЙЫШЛӐН ТАРАҪҪӖ

ЖЕНЕВА, апрелӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Сюисс» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Германире предприятисенчен тата лагерьсенчен таракан ют ҫӗршыв рабочийӗсен хисепӗ кунсеренех ӳссе пырать. Берлинра, пурнӑҫ йӗркерен тухнипе усӑ курса, вӑрттӑн пурӑнакан ют ҫӗршыв рабочийӗсем нумай. Ирӗксӗр ӗҫлеттерекен ӗҫрен пӑрӑнакансем нумайӗшӗ ушкӑнсене пӗрлешеҫҫӗ те ҫынсене тапӑнаҫҫӗ, ҫапла майпа хӑйсем валли тумтирпе апат-ҫимӗҫ тупаҫҫӗ. Хаҫат ҫапла калать: ют ҫӗршыв рабочийӗсене тарма чарас тесе (вӗсем ытла та йышлӑн тарма пуҫланӑ), Германи влаҫӗсем питӗ хаяррӑн хӑтланаҫҫӗ. Ирӗк памасӑр ӗҫе пӑрахса каякан кашни ют ҫӗршыв рабочине тӗл пулнӑ ҫӗртех персе пӑрахмалла тунӑ.

Союзниксен авиацийӗ Белградпа София хулисене тапӑнни

ЛОНДОН, апрелӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС) Рейтер агентствин союзниксен Италири ҫарӗсен штабӗ ҫумӗнчи корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: паян союзниксен Италири йывӑр бомбардировщикӗсем Белградпа София хулисенчи чугун ҫул сооруженийӗсене тапӑннӑ. Йывӑр бомбардировщиксен ытти соединенийӗсем Белград районӗнчи авиаци заводӗсемпе аэродромсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

«РЕЙНОЛЬДС НЬЮС» ХАҪАТ ИСПАНИ ФИРМИСЕНЧЕН ТУПӐШ УКҪА ИЛСЕ ТӐНИ ҪИНЧЕН

ЛОНДОН, апрелӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). «Рейнольдс ньюс» хаҫат хӑшпӗр акӑлчансем Испанипе Португалири вольфрам компанийӗсенчи хӑйсен вклачӗсене ӳстернӗ тесе пӗлтернине тӗрӗслеме ыйтать. Ҫав фирмӑсенче хӑшпӗр акӑлчансен яланах пысӑк вкладсем пулнӑ. Германие вольфрам парса тӑнӑ пирки, ҫав фирмӑсем халь акци тытакансене вӑрҫӑччен хинчен 5—8 хут ытларах тупӑш парса тӑраҫҫӗ.

ГЕРМАНИ ШВЕЦИН ҪАР КАРТТИСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КӐЛАРНА

СТОКГОЛЬМ, апрелӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Швеции ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви ҫакӑн пек пӗлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ: Хельсингборг хулинчи таможня (Кӑнтӑр Швеци) Швеци ҫар карттисене конфискациленӗ. Карттӑсен масштабӗ—1:100.000. Ҫав карттӑсене Хельсингборг хулипе Данирен паром ҫине тиесе илсе пынӑ. Вӑл карттӑсене Германири пӗр фирма Осло хулине янӑ пулнӑ.

«Стокгольмс Тиднинген» ятлӑ хаҫат ҫапла ҫырать: вӑл карттӑсене Германире хатӗрлесе пичетлесе кӑларнӑ. Вӗсене тума Швецин генеральнӑй штабӗ пичетлесе кӑларнӑ карттӑсемпе усӑ курнӑ. Пӗтӗмпе 25.000 карттӑ пичетлесе кӑларнӑ.

«Дагенс нюхетер» ятлӑ хаҫат ҫапла ҫырать: Ҫакна асӑрхаса тӑма тивӗҫлӗ: нимӗҫсем вӑрҫӑн ку тапхӑрӗнче пулин те Швецие кӗрсе каймалла пулмӗ-и тесе хатӗрленсе ӗҫлеҫҫӗ.»

КӖСКЕН

▲ Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа США ҫарӗнче 178.481 ҫын, тинӗс-ҫар флотӗнче 43.849 ҫын пӗтнӗ.

▲ Ҫурҫӗр Италире вӑрттӑн тухакан хаҫатсем нумай саралаҫҫӗ. Милан Венеци, Болонья, Флоренци хулисенче халӑхӑн пысӑк пайӗ вӑрттӑн тухса тӑракан хаҫатсене кашни кунах вулать.

▲ Француз халӑхне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешекен комитет йышӑннӑ тӑрӑх, Францире нимӗҫсене хирӗҫ кӗрешекен организацисене пулӑшма укҫа-тенкӗ пухмалли кампание вӗҫленӗ. Мартӑн 24-мӗшӗ тӗлне 466 миллион та 541 пин франк укҫа пухӑннӑ.

АТӐЛ ҪИНЧЕ

Юлашки талӑкра Атӑл шывӗ 1 метрта 28 сантиметр хутшӑннӑ. Атӑл пӑрӗ вакланса юхать.

Сывлӑшри температура 2,5 градус ӑшӑ, шыв температури 0 градус

АГРОТЕХНИКА КӖТЕСӖ

Ког-сагыза ал вӗҫҫӗн йӑва туса акасси

1943 ҫулта Т. Д. Лысенко академик кок-сагыза ал вӗҫҫӗн йӑва туса акмалли меслетпе усӑ курма сӗннӗ. Ку меслетӗн тӗллевӗ, яланхи меслетсемпе танлаштарсан, сахал вӑй хунипех кок-сагыз тымарӗн тухӑҫлӑхне татах та ытларах ӳстересси пулать.

Кок-сагыза ҫак меслетпе ҫӗртме тунӑ ҫӗр ҫине ҫуркунне лайӑх ҫемӗҫтерсе акмалла. Кок-сагыз ӳсентӑранӗсене плантаци ҫине йӑвасем туса вырнаҫтармалла, ҫав йӑвасем хушши йӑран тӑрӑх 35 сантиметр, йӑрансен хушши 60 сантиметр пулмалла. Ӳсентӑрансене йӑвасене вырнаҫтарни йӑран хушшисене ҫеҫ мар, йӑва хушшисене те ҫемӗҫтерме май парать.

Кок-сагыза йӑвана лартнӑ пулсан, унӑн тымарӗсене кӑларнӑ чухне ӗҫ тухӑҫлӑхӗ нумай хӑпарать, тӑккаланчӑксемпе кӗрешме ҫӑмӑлтарах пулать, мӗншӗн тесен, пӗр гектар лаптӑкран темиҫе ҫӗршер пин уйрӑм-уйрӑм ларакан тымарсене кӑклас вырӑнне, 50.000 йӑваран ҫеҫ тымарсене кӑкласа кӑлармалла пулать.

Кок-сагыза ал вӗҫҫӗн, йӑвана лартас пулсан, агротехникӑн ак ҫак тӗп требованийӗсене пурнӑҫламалла:

ТӐПРАНА ХАТӖРЛЕССИ

Кок-сагыза ал вӗҫҫӗн йӑвана лартас пулсан, ӑна тарӑн сухаласа кӗрхи ҫӗртме тунӑ вырӑна акмалла. Ҫуркунне ҫеҫ сухаланӑ ҫӗр ҫине лартма юрамасть, мӗншӗн тесен ун чухне акнӑ вӑрлӑх пӗтӗмпех пӗтсе ларать.

Ҫуркунне уя тухма май килнӗ пирвайхи кунсенчех, касӑсен тӑррисем типшӗрме пуҫласанах, нӳрлӗхе ытларах тытса хӑварас шутпа, кӗрхи ҫӗртме тунӑ лаптӑка йӑрансем урлӑ е чалӑшшӑн икӗ хутчен сӳрелемелле е шлейфовани тумалла.

Тӑпра пиҫсе ҫитсенех (тӑпра ялан тенӗ пекех сӳреленӗ хыҫҫӑн тепӗр кунран пиҫсе ҫитет), акас умӗнхи ӗҫсене тумалла: тӳрӗ касса пыракан лапаллӑ культиваторпа ҫемҫетмелле. Акас умӗн тумалли культивацине вӑрӑма тӑсма юрамасть, ӑна тӑпра пиҫсе ҫитсенех (ҫынҫӑнми пулсан), ҫийӗнчех, сӳреленӗ вӑхӑтрах туса ирттермелле. Тӑпрана тӗплӗнрех хатӗрлес тесен, шлейфование икӗ хут тумалла, вара участокӑн ҫийӗ танлашать, тӑпран ҫиелти сийӗ пусӑрӑнать, нӳрлӗх те вара вӑрӑсем вырнаҫас тӗлте тытӑнса юлать.

Культивацине шлейфовани хыҫҫӑн ҫийӗнчех акмалла

ВӐРЛӐХА АКМА ХАТӖРЛЕССИ

Кок-сагыза ҫуркунне ал вӗҫҫӗн йӑвана акнӑ чухне, лайӑх хатӗрленӗ—стратифицациленӗ вӑрлӑх ҫеҫ акмалла. Пӗр гектар ҫине 100 процентчӗпех юрӑхлӑ 2 килограмм вӑрлӑх кирлӗ пулать.

Кок-сагыз вӑррисене йӑвасем тӑрӑх пӗр пек виҫене акас тесен, вӑрлӑха ҫӗрӗк тӑприпе хутӑштармалла. 2 килограмм 100 процентчӗпех юрӑхлӑ вӑрлӑха 300 килограмм ҫӗрӗк тӑприпе хутӑштармалла. Кок-сагыз лартмалли гектар ҫинче 50.000 йӑва пулсан, кашни йӑвана вӑрлӑхпа пӗрле 5 грамм ҫӗрӗк тӑпри каять, вара ҫамрӑк ӳсентӑрансем те аванрах аталанса ӳсеҫҫӗ. Ҫӗрӗк тӑприне малтанах хатӗрлесе хумалла. Ӑна 3—4 миллиметр шӑтӑксемлӗ алапа лайӑх аласа хумалла. Ҫӗрӗк тӑпри питӗ типӗ пулсан, ӑна нӳрӗлетмелле, чӑмӑртасан муклашка пулса хӑй формине упраса тӑтӑр, ҫӗре пӑрахсан ҫӑмӑллӑнах сапаланса кайтӑр. Ҫӗрӗк тӑприне, акас умӗн темиҫе кун маларах, шӑтӑксемлӗ лейкӑпа пӗрӗхмелле, вара нӳрӗлӗх тикӗс сапаланать, кайран пӗтӗм купине пӑтраштармалла. Вӑрӑсене ҫӗрӗк тӑприпе акнӑ кун ҫеҫ, ҫур кун акма ҫитмелӗх, хутӑштарса хатӗрлемелле. Хутӑштарнӑ хыҫҫӑн 5 сехетрен кая юлмасӑр акса пӗтермелле, унсӑрӑн стратификациленӗ вӑрӑсем, нӳрлӗ ҫӗрӗк тӑприпе хутӑштарнӑскерсем, часах шӑтса кайма пултараҫҫӗ.

Вӑрӑсене ҫӗрӗк тӑпри витӗр яка та таса, шӑтӑк-ҫурӑксӑр урайӗнче е брезент ҫинче хутӑштармалла. Стратификациленӗ вӑрӑсем хушшинче сӑмсаланнӑ пӗрчӗсен хисепӗ 1—2 процентран ытла пулмалла мар. Вӑрӑсемпе ҫӗрӗк тӑпри хутӑшӗ пӗр пек пултӑр тата вӑхӑтра акӑнса пӗттӗр тесе, ӑна кашни ҫур гектар лаптӑк валли уйрӑмӑн-уйрӑмӑн хатӗрлесе пымалла.

Стратификацилеме хывнӑ чухне те вӑрлӑхсене ҫав виҫене хисепе илсе хумалла. Ҫур гектар акмалӑх хутӑш хатӗрленӗ чухне малтан пӑртакҫӑ, калӑпӑр, 20 килограмм ҫӗрӗк тӑпри хываҫҫӗ. Ҫав ҫӗрӗк тӑприпе пӗрле вара кок-сагыз вӑррисене ал вӗҫҫӗн пӑтраштараҫҫӗ. Унтан ун ҫумне каллех 60 килограмм ҫӗрӗк тӑпри хутӑштараҫҫӗ те каллех тӗплӗн пӑтраштараҫҫӗ. Юлашкинчен вара ытти ҫӗрӗк тӑприне (80 килограмм) хываҫҫӗ те вӑрӑсем тикӗс сапаланиччченех ҫӗнӗрен тӗплӗн пӑтраштараҫҫӗ.

Вӑрӑсене ҫӗрӗк тӑприпе тӗплӗн тата пӗр тикӗс пӑтраштарни йӑвасем ӑшне кок-сагыз тӗмисене пӗр пек вырнаҫма пулӑшать.

Ҫӗрӗк тӑприпе хутӑштарса акма хатӗрлесе хунӑ вӑрлӑха михӗсене тултармалла, е брезентпа, е пирпе витсе хумалла, унсӑрӑн вӑрлӑх типме пултарать. Акас нормӑна тӗрӗс тӑвас тесен, акас умӗн кашни акакана ҫакӑн ҫинчен ӑнлантарса памалла. Вӑл мӗнле акнине тӗрӗслес тесен, вӑрлӑха чӗптӗмпе илсе (6 грамм таран) тӗрӗслесе пӑхмалла. Ҫав шутпа кашни акакана тивӗҫлӗ таран нӳрӗлетнӗ ҫӗрӗк тӑприне 600 грамм, 100 йӑвана лартмаллӑх, виҫсе памалла та, пӗр тикӗс акнине пӳлӗмре, урайӗнче тӗрӗслесе пӑхмалла.

КОК-САГЫЗА АКАССИ

Тӑпрана акма хатӗрлесе хунӑ хыҫҫӑнах, вӑхӑта тӑсмасӑр, акма тытӑнмалла. Акас умӗн йӗрсем туса тухмалла. Йӗр тумалли япалана маркер теҫҫӗ. Маркер касӑсене тарӑн ан тутӑр, унӑн тан татнӑ, пуклак вӗҫлӗ шӑлсем пулччӑр. Маркер шӑлӗсене тӳррӗн лартма юрамасть, чалӑштарса, кӑшт каялла ӳпӗнтерсе лартмалла. Ҫӗре путакан шӑлсен пайӗсем ҫавракa мар, лаптӑк пулмалла. Кашни шӑлӑн сарлакӑшӗ 5—6 сантиметр пулмалла. Шӑлсем хушши 60 сантиметр пултӑр. Лаша туртакан маркерӑн малтанхи кассине кантӑра тӑрӑх е йӑвӑ лартнӑ паллӑсем тӑрӑх чӗртерсе тухмалла, вара касӑсем тӳп-тӳрӗ пулаҫҫӗ. Касӑсен тарӑнӑшӗ пысӑк мар, 1,5—2 сантиметр таран ҫеҫ пулмалла. Ҫакна лайӑх асӑрхаса тӑмалла. Маркер 1,5—2 сантиметртан тарӑнрах касӑсем тӑвать пулсан, йӗнерчӗке хытӑрах хӑпартса ҫыхмалла. Маркерӑн касӑ йӗррине, нӳрӗ тӑпра ҫине ҫийӗнчех акмалла пултӑр тесе, йӗрсене акас умӗн ҫеҫ тумалла.

Гектар пуҫне хутӑша тивӗҫлӗ нормӑпа тикӗс акас тесен, кашни акакана икӗ касӑ лартмалӑх хутӑш валеҫсе памалла. Ку виҫене чухласа илме ҫӑмӑл. Кашни тӑрӑхла метр тӑршшӗнче кок-сагыз лартмалли виҫӗ йӑва вырнаҫать. Ҫапла вара, пӗр тӑрӑхла метр касӑ валли 18 грамм таран хутӑш кирлӗ. Участок вӑрӑмӗшне пӗлсен, икӗ касӑ валли мӗн чухлӗ хутӑш кирлине шутласа тухма пулать. Тӗслӗхрен, касӑн тӑршшӗ 150 метр пулсан, икӗ касӑ валли 5,4 килограмм хутӑш кирлӗ пулать. Хӑвӑрт та ҫӑмӑллӑн виҫсе илес тесен, вӑрӑпа ҫӗрӗк тӑпри хутӑшне кирлӗ таран ӑсса илмелли виҫе пулмалла. Акакан михӗрен хутӑша виҫепе илсе те хӑйӗн саваҫ-сапи ҫине тултарать. Акнӑ чухне конус евӗрлӗ витрепе усӑ курма лайӑх. Акнӑ чухне мӑшӑрӑн ӗҫлесси аванрах. Пӗр колхозници кашни 35 сантиметр хушши маркерӑн пусӑрӑннӑ йӗрӗ хыҫҫӑн, маркер чӗртерсе тухнӑ нӳрӗ тӑпра ҫине пӗр чӗпкӗм хутӑш хурать те ӑна ывӑҫ тупанӗпе пусса вырнаҫтарать. Хунӑ хутӑшӑн калӑпӑшӗ 4—5 сантиметртан ытла пулмалла мар. Акнӑ чухне ҫакна асӑрхамалла: вӑрлӑхпа ҫӗрӗк тӑпри хутӑшне тӑпра ҫумне лайӑх пусарса хумалла.

Тепӗр колхозници теприн хыҫҫӑн пырать те йӑвасене тӑпрапа ҫӗрӗк тӑпри хутӑшне сӳхен (0,5 сантиметртан хулӑм мар) витсе пырать. Тӑпрапа ҫӗрӗк тӑпри хутӑшне муклашкаллӑ мар, тӗпретсе витмелле. Акнӑ йӑвана таврари тӑпрапа пӗртан витсе хумалла. Маркер тарӑн касӑ чӗртерсе кайсан, акас вырӑн таврари тӑпраран путӑкрах пулсан, ҫав вырӑна нӳрӗ тӑпра пухса тултармалла. Маркер нимӗнле шӑтӑк та тӑваймасан (хутӑша акас умӗн) тӑпран ҫиелти сийне хӑйпӑтмалла, унсӑрӑн ҫав вырӑнта, лартнӑ хыҫҫӑн тӗмеске пулса юлма пултарать.

Плантацисем ҫинче ӗҫсене вӑхӑтра тӑвас тата кок-сагыз калчине тупма ҫӑмӑл пултӑр тесе, кок-сагыз йӑвисен хушшине хуратул, кантӑр акмалла. Ҫав шутпа кок-сагыз лартакан колхозница касӑ майӗпе кашни йӑваран 5 сантиметр аяккарах 1—2 хуратул пӗрчи тӑпра ӑшне пусарса вырнаҫтарса пырать.

Кок-сагыза ал вӗҫҫӗн йӑвана акассине тӑпра пиҫсе ҫитнӗ хыҫҫӑн 2—3 кунран кая хӑвармасӑр туса ҫитермелле. Акана кӗске срокра туса ирттерсен кӑна калчасем шанчӑклӑ тата кар шӑтса тухма пултараҫҫӗ.

Ал вӗҫҫӗн йӑвана акас меслетпе тӗрӗс усӑ курнӑ пулсан, йӑвасенчен 5—6 кунран калчасем шӑтса тухмалла, вара плантацине йӗркене кӗртме тытӑнма юрать. Ытти ӗҫсене туса ирттернӗ хушӑра йӑвари калчасене тӑпра айне тӑвассинчен сыхланмалла. Ҫуркунне-ҫулла плантацири тӑпрана яланах кӑпӑшка тата таса усрамалла. Ҫапла пултӑр тесен, йӑран хушшисене культиваторпа сухаламалла, йӑвасен хушшисене тяпкӑпа тарӑн кӑпӑшкалатмалла. Йӑвасенчи кок-сагыз тӗмисене сайралатма кирлӗ мар. Йӑвасенчен каучуксӑр кукшапуҫсене ҫеҫ вӑхӑтра ҫумласа ывӑтмалла. Ку ӗҫе ирттерех туса ирттермелле, кок-сагыза ҫумлӑ кукшапуҫсенчен уйӑрмаллӑх пулсанах, ҫулҫӑ ӳснӗ ҫӗртсен тытса кӑлармалла.

Кок-сагыза ал вӗҫҫӗн йӑвана акнӑ опыт акӑ мӗн кӑтартрӗ: кок-сагыз ӳсе ҫитӗннӗ тапхӑрта плантацие кӑпӑшкалатса, тасатсах тӑрсан, кашни йӑваран 100—150 грамм тымар туса илме пулать, ҫапла вара, пӗр гектар ҫинче 50 пин йӑва пулсан, пирвайхи ҫулах кашни гектартан 40—50 центнер кок-сагыз тымарӗ пухса илме пулать.

Д. И. ФИЛИППОВ,
Сталинла премии лауреачӗ.
А. Ф. ЮДИНА,
Каучуконоссен Пӗтӗм Союзри Институчӗн селекци отделӗн заведующийӗ.

Н. К. АЛТУХОВ
Каучуконоссен Пӗтӗм Союзри Институчӗн агротехника отделӗн заведующийӗ.
Л. М. ФУРМАН,
Ялхуҫалӑх наукисен кандидачӗ.

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00594 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.